25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
11
ШАМАТКУН
160(6095) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЫЛЬĂХ ВИТИСЕНЕ ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕМЕЛЛЕ

Республикăри колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕхĕн йышĕ кăçал иртнĕ çултипе танлаштарсан чылай ÿсмелле. Майракаллă шултра вылăхсем 23.819 пуç, сыснасем 20.703 пуç, сурăхсемпе качакасем 51.831 пуç хутшăнмалла. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана республика, пĕтĕмĕшпе илсен, ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Паянхи куна республика сыснасем ĕрчетмелли плана 101 процент пурнăçланă та ĕнтĕ. Çавăн пекех ытти йышши вылăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе те уйрăм районсем пысăк ÿсĕмсем тăваççĕ.

Çĕршывпа Хĕрлĕ Çар ыйтнине шута илсе, вĕсем валли апат-çимĕç продукчĕсемпе чĕртавар малашне те ытлăн çитерĕн парса тăма пирĕн колхозсен кăçал çамрăк вылăхсене шурне те тĕрĕс тĕкĕл пăхса ÿстермелле, вылăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне хăпартмалла. Çак ответлă ĕçе вĕçне çитиччен тĕплĕн пурнăçлама кашни колхозăн вылăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç базине çирĕплетсе хăвармалла тата вылăхсен пĕтĕм йышĕ валлиех ăшă витесем хатĕрлемелле.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановлени тăрăх июлĕн 1-мĕш тĕлне республикăри пур колхозсенче те вылăх-чĕрлĕх витисене пăхса тухса, вĕсем вылăх-чĕрлĕх тытса усрама юрăхлипе юрăхлă марине палăртса актсем тăратмаллаччĕ. Республикăн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хăйсен çак постановленийĕпе районсенчи çĕрĕç пайĕсене, колхозсен руководителĕсене вылăх-чĕрлĕх витисене хĕллене валли юсаса хурас тата çĕнĕрен витесем тăвас ĕçе вăхăтра тĕплĕн пурнăçа кĕртме хушнă. Анчах та чылай районсем ку постановлениe халĕ те пурнăçламан. Витесене пăхса тухса актсем çырас ĕçе пурĕ те 10 район кăна вĕçленĕ.

Кăçал пирĕн колхозсен план тăрăх ĕнесем валли çĕнĕрен 239 вите, пăрусем валли 378 вите тумалла. Кунсăр пуçне, çĕнĕрен туса е кивĕ витесене юсаса 29.313 пуç сысна, 53.292 пуç сурăх, 97.147 пуç чăх-чĕп тата икĕ пине яхăн кролик усрамалăх витесем хатĕрлемелле. Етĕрне тата Елчĕк районĕсенче 420 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ витесем тумалла. Çак пысăк ĕçе халĕ, тырăсене пухса кĕрес ĕç вăхăчĕ пуçланиччен, тумалла.

Анчах çак ответлă ĕçе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ку тĕлĕшпе ĕçлекен ответлă работникĕсем те, нумай районсенчи çĕрĕç пайĕсен руководителĕсемпе колхоз руководителĕсем те тивĕçлипе тума тытăнман-ха. Чылай колхозсенче витесем паян кун та шăтăк-çурăккипех тăраççĕ.

Канаш районĕн, план тăрăх, лаша витисем çĕнĕрен 6 колхозра тумалла, паянхи куна витесене икĕ колхозра çеç туса лартнă, пăру витисем пурĕ 19 çĕрте тумалла, 4-шне çеç тума пуçланă. Çĕрпÿ районĕнче кăçал ĕне витисем пурĕ 400 пуç вырнаçмалăх тумалла тата кивĕ витесене 1.228 ĕне вырнаçмалăх юсаса хатĕрлемелле. Паянхи куна витесене 347 ĕне вырнаçмалăх çеç юсанă. Июлĕн 1-мĕш тĕлне вылăх витисене юсас ĕçе районра 26 колхоз çеç пуçăннă. Çĕмĕрле районĕ çĕнĕ витесем тăвас ĕçе пуçăнман-ха; план тăрăх вĕсен 2.060 пуç чăх-чĕп вырнаçмалăх витесем юсаса хатĕрлемелле, паянхи куна мĕн пурĕ те 500 пуç вырнаçмалăх çеç юсанă.

Колхозсен обществăллă вылăх-чĕрлĕхне ĕрчетессишĕн, вĕсен продуктивноçне малалла ÿстерсе пырассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă колхозсем вылăхсене валли ăшă витесем хатĕрлес ĕçе, кĕркуннене хăвармасăр, халĕ тума тăрăшаççĕ. Канаш районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ефремов юлташ) 60 пуç ĕне, 130 пуç сысна, 90 пуç сурăх вырнаçтармалăх витесем юсанă, тасатса дезинфекциленĕ. Халĕ 270 пуç чăх-чĕп вырнаçмалăх вите тума тытăннă. Тăвай районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 60 пуç лаша вырнаçмалăх вите тунă. Анчах социализмлă ăмăрту пур колхозсенче те тивĕçлипех сарăлман-ха.

ЧАССР Совнаркомĕ вылăх-чĕрлĕх витисене юсасси çинчен йышăннă хăйĕн постановленийĕнче колхозсене ку ĕçе тума уйрăм звеносем уйăрса çирĕплетме хушнă. Райçĕрĕç пайĕсенчи техник-строительсем колхозсенчи строительсен бригадисемпе звенисене ĕçре куллен ертсе пыма тивĕçлĕ. Çав звеносенче тăракан колхозниксене ытти ĕçсене хутшăнтармасăр, пĕрмаях витесем юсанă çĕрте ĕçлеттермелле. Колхоз руководителĕсен çав звеносен ĕçне тайăх организацилемелле. Витесем тăвас ĕçре вырăнти материалсемпе ытларах усă курмалла.

Республикăри колхозсенче вылăхсем валли витесем тăвас, кивисене юсас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Тума пуçланă витесене пурне те туса çитермелле. Райçĕрĕç пайĕнчи работникĕсемпе колхоз руководителĕсен çак ĕçри пĕтĕм ответлăха туйса илмелле, вылăх витисене хĕле тĕплĕн хатĕрлесе çитерессишĕн большевикла тăрăшмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронежран** хĕвеланăçнерех вырăнта тата **Россош** хули районĕнче вăйлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлла улшăнусемех пулман.

Балтика тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 2 транспортне тата пĕр танкерне путарнă, вĕсен водоизмещенийĕ пĕтĕмпе 22.000 тонна пулать.

* * *

Июлĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 танкне ытла, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 215 автомашинине, горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, полевой тата зенитнăй артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, конаперски лодкăна тата хуралра çÿрекен катера путарнă, темиçе транспорта сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран хĕвеланăç еннерехри участоксенчен пĕринче хаяр çапăçусем пулса пыраççĕ. Слобода юлташ командир пулса ертсе пыракан танксен подразделенийĕ противникăн позицийĕсене атакăланă. Подразделени командирĕ çапăçма хатĕрленсе тăнă нимĕç пехотин йĕрки ăшне хăй малтан кĕрсе кайнă та противника пысăк çухатусем тÿстернĕ. Хăйсен пехотине пулăшма гитлеровецсем танксем нумай янă. Танксен çапăçăвĕнче пирĕн танкистсем нимĕçсен 4 вăтам танкне, танксене хирĕç пемелли 19 орудине тата 2 минометне расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Воронежшăн пыракан çапăçусенче совет воинĕсем хăюлăхпа хастарлăх тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Танксене хирĕç кĕрешекен взводăн, кĕçĕн лейтенант Сиротин командир пулса ертсе пыраканскерĕн, позицийĕсем çине тăшман пехотин батальонĕ тапăнса пынă. Икĕ тупăран персе тăрса, хăюллă боецсем противникăн 5 атакине сирсе янă, 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Вестник юлташ командир пулса ертсе пыракан минометсен роти пĕр кун хушшинче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен чаçсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă, пĕр дзота, 10 блиндажа çĕмĕрнĕ тата противникăн боеприпассем усракан складне сирпĕнтерсе янă. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна çити вилнĕ тата аманнă.

* * *

Скок юлташăн подразделенийĕнчи пикировка тăвакан 4 бомбардировщик (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) противникăн аэродромĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Зенитнăй артиллерирен вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, пирĕн летчиксем нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă, 2 самолетне сиенленĕ.

* * *

Баталов сержант ертсе пыракан 8 бомбардировщик нимĕç самолечĕсем çине орудисенчен персе нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши самолетне ÿкернĕ, 3 летчика тыткăна илнĕ.

* * *

Сержант Соколов командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ тăшманăн оборони ăшне нумай шала кĕрсе кайнă. Телефон çыхăнăвне пăсса хурса, пирĕн боецсем нимĕç салтакĕсем тăнă çурта гранатăсем ывăтнă, 30 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Унтан штык вĕççĕн çапăçма тытăнса тата 20 нимĕçе пĕтерсе тăкнă та пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Нимĕç самолечĕ, пулеметран темиçе черет персе ярса, шофер Абрамов юлташ тытса пыракан автомашина çинчи снарядсен ещĕкĕсене вут тивертсе янă. Хăюллă шофер, хăйне шеллесе тăмасăр, çунакан ещĕксене машина çинчен илсе пăрахнă та вутта сÿнтернĕ. Боеприпассене позицисем патне вăхăтра илсе çитернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ, Б. тата К. юлташсем командир пулса ертсе пыраканскерсем, нимĕçсен карательнăй экспедицине хирĕç çапăçса 120 оккупанта пĕтерсе тăкнă, пĕр пулемет, 12 винтовка, автоматсем, пистолетсем тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

* * *

Фашистсен тыткăнĕнчен тарса килнĕ сержант Иван Иванович Юдин çапла каласа панă: «Эпĕ пулнă лагере Таганрогран 12 километрти Николаевка ялĕнчен Сталинăна куçарчĕç. Николаевка ялĕнчен Степановка ялне çитиччен (вĕсен хушши 45 километр) гитлеровецсем çул çинче тыткăнри 150 çынна персе вĕлерчĕç. Халран кайнипе колоннăран юлнисене пурне те фашистла ирсĕрсем пĕр шеллемесĕр пере-пере пăрахрĕç. Сталинăра тыткăнри çынсем валли тунă лагерьте вырăнсăр, чирлесе тата хĕненипе куллен 15—20-шер çын вилет. Нимĕçсем тыткăнри çынсене çĕрнĕ çĕрулми çитереççĕ, 5 çынна пĕр котелок çĕрнĕ çĕрулми параççĕ. Ытла йывăр ĕçлесе халран кайнисене тата чирлĕ çынсене гитлерла бандитсем вырăнтах персе пăрахаççĕ».

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕçсен фашистла çарĕ питех те пысăк çухатусем тÿснине пула гитлерла шайкăн каллех Францирен чылай йышлă войскăсем илсе тухса вĕсене хĕвелтухăçне яма тивнĕ. Нимĕçсен вăйсăрланса юлнă гарнизонĕсем ĕнтĕ унти çирĕплетнĕ вырăнсене çителĕклĕ лайăх сыхласа тăраймаççĕ Çавна май диверсиллĕ ĕçсем питĕ йышланса кайнă. Июнь уйăхĕнче Лилль районĕнче (Франция) француз патриотсем бетонран тунă 16 дзота çĕмĕрнĕ. Нумай дзота çĕрпе витсе тата шыв тултарса лартнă.

Июлĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронежран** хĕвеланăçнерех вырăнта тата **Россош** хули районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлла улшăнусемех пулман.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта çапăçакан пирĕн чаçсем противника пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Çавăнти участоксенчен пĕринче пирĕн боецсем нимĕçсен пехотнăй полкĕн 3 атакине сирсе янă, 7 танк тата 500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем тăшманăн мотопехотин колоннине аркатса тăкнă, нимĕçсен 26 автомашинине тата 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем 3 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 4.000 çынна çити вĕлернĕ, 27 танк тата 5 бронемашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Морозов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри артиллеристсем юлашки кунсенче нимĕçсен 2 орудине, 2 станковăй пулеметне, боеприпассен складне, пĕр автомашинине тата грузсем тиенĕ 4 лавне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 7 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Капитан Бунделеев командир пулса ертсе пыракан истребительсен ушкăнĕ, çĕр çинчи войскăсене хÿтĕлесе пырса, нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши 3 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Захаров лейтенантпа кĕçĕн политрук Баранов ертсе пыракан 10 разведчик нимĕçсен оборонин малти хĕрри патне йăпшăнса пынă. Пирĕн боецсене асăрхасан, гитлеровецсем хăйсен боевой хуралне пулăшма 100 салтака çити янă. Пирĕн разведчиксем противника хирĕç çапăçма тытăннă, 50 нимĕçе çити пĕтерсе тăкнă та пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Калинин облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ июнь уйăхĕнче нимĕçсен салтаксемпе çар грузĕ турттарса пыракан 9 эшелонне тата 2 бронепоезда ÿпĕнтерсе янă, чугунçулĕпе шоссе çулĕ çинчи 12 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата 600 оккупанта ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Финн çарĕн 22-мĕш уйрăм батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Лаури Р. çапла каласа панă: «Пирĕн батальона тĕрмесенчен срокчен кăларнă дезертирсенчен пухса тунă. Эпир фронта килсессĕн, 9 салтак — эпир вăрçмастпăр, тесе татăклăн каларĕç, вĕсене вара çийĕнчех тытса хупрĕç. Батальон командирĕ Лахденсус подполковник хăйĕн салтакĕсене начар тесе шутлать. Çак кунсенче вăл çапла каласа хучĕ: «Эпĕ ялан атăпа çывăратăп, мĕншĕн тесессĕн эпĕ батальон çине шанниччен хамăн ура çине ытларах шанатăп», терĕ.

* * *

Венгрсен 8-мĕш пехотнăй бригадинчен Хĕрлĕ Çар енне каçса килнĕ Капрал Шандер К. çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусем нимĕçсем çын вăйĕпе пуйма шухăшланине венгр салтакĕсене нумайĕшне ĕнентерсе пачĕç. Нимĕç командованийĕ венгр чаçĕсене чи хăрушă участоксене, вырăссен вилĕм кÿрекен вучĕ айне персе чикет. Çак ирсĕрлĕхе ăнланса илсен, салтаксен йышлă ушкăнĕсем çапăçăва кайма килĕшмерĕç, вĕсем киле яма ыйтрĕç. Нимĕçсем пире персе пăрахассипе хăратма хăтланчĕç, анчах та салтаксем çапла каларĕç: эпир хамăр правăсене тата хамăр пурнăçа алла хĕçпăшал тытса хÿтĕлĕпĕр, терĕç; офицерсен те пĕр ушкăнĕ салтаксем майлă пулчĕ. Германи командованийĕ хушнă тăрăх вара венгр подразделенийĕсене хăшне-пĕрне çывăхри тыла илсе кайрĕç. Унта салтаксемпе офицерсенчен пуринчен те хĕçпăшалсене тытса илнĕ те арестленĕ. Вĕсене санитарнăй вагонсене лартса, аманнă салтаксем шучĕпе Венгрие илсе кайнă. Мана тата салтаксен пысăк ушкăнне тарма май килчĕ. Эпир фронт линийĕ урлă пĕчченшерĕн каçса тыткăна парăнма шут тытрăмăр».

* * *

Франци патриочĕсем Марсельре çар хатĕрĕсем хунă склада вут тивертнĕ; çав материалсене Италипе Германин Африкăри çарĕ валли ямалла пулнă. Питĕ вăйлă пушар тухнă. Порта тата порт çывăхĕнчи районсене пурне те темиçе кун хушши тĕтĕм хупăрласа тănă.

* * *

Боеприпассен Наркомачĕн Невсоструев юлташ директор пулса тăракан заводĕн коллективĕ июньри плана ăнăçлăн тултарнă. Завод графика çирĕп тытса пырса, хавхаланнăçемĕн хавхаланса ĕçлет. Июль уйăхĕн малтанхи 7 кунĕ хушшинче завод пур тĕрлĕ продукцисем тĕлĕшпе те задание 33,3 процент ирттерсе тултарнă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕçне çĕнĕрен йĕркелесе яраççĕ

Калинин облаçĕн ирĕке кăларнă районĕсенчи колхозниксем обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ, вылăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлеççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх фермисем валли 118.000 пăру, 60.000 ытла сурăх тата 350.000 яхăн сысна çури илнĕ. Колхозсенче мăйракаллă шултра вылăх фермисем, сурăх фермисем, сысна фермисем, кайăк-кĕшĕк фермисем çĕршер организациленĕ.

Калинин облаçĕнче июлĕн 1-мĕш тĕлне силос пĕлтĕрхинчен (пĕлтĕр çав вăхăта хывнинчен) виçĕ хут çурă ытла хывнă. (ТАСС).

Çĕпĕрте кăçал тыра тулăх пулать

Çĕпĕрĕн таçта çити сарăлса выртакан хирĕсенче кăçал тыра питĕ ăнса çитĕт. Новосибирск облаçĕнчи районсенчен нумайĕшĕнче кĕрхи тырăсем пăркана ларнă, ыраш 100—150 сантиметр çÿллĕшпе çитет. Çуртрисем те лайăх çитĕнеççĕ. Пур паллăсем тăрăх пăхсан та, Новосибирск облаçĕнче кăçал тыра пĕлтĕрхинчен нумайтарах тухать. (ТАСС).

Медицинăн вăтам шкулĕсене вĕренме илесси

СССР Наркомздравĕ медицинăн вăтам шкулĕсене вĕренме илмелли плана çирĕплетнĕ. Кăçал çав шкулсене вĕренме 40.000 çынна ытла илеççĕ.

1942 çулта туллимар вăтам шкулсенчен «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăр илеççĕ, унтан каярах паллăсемпе вĕренсе тухнисен вырăс чĕлхипе тата математикăпа экзамен памалла, шкулта урăх чĕлхепе вĕрентекен вырăнсенче çав шкулта вĕрентекен чĕлхепе экзамен памалла. (ТАСС).

Колхоз вылăх ĕрчетмелли плана тултарнă

ЭЛĔК. Тавăтри «Сталинит» колхоз обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарчĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вылăхсен йышне татах ÿстерме хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç.

— Эпĕ йышлă вылăх-чĕрлĕхшĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса татах та тухăçлăн ĕçлеме сăмах паратăп. Хам пăхакан сурăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерме тата кашни сурăхран 3 килограммран кая мар çăм илме обязательство илетĕп,—тет сурăх фермине ĕçлекен Е. Семенова юлташ.

Екатерина Семенова 3-мĕш çул ĕнтĕ ферма сурăхĕсене пăхать. Вăл хăйĕн ĕçне юратса туса пырать. Çавна пула унăн ĕç тухăçлăхĕ татах та ÿсрĕ. Семенова кăçал та 26 сурăхран 29 путек илсе пăхса ÿстерчĕ, 36 сурăхран 59 килограмм çăм илчĕ.

М КУСТИКОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Хĕрлĕ ялавлă заводри митинг

Июнĕн 10-мĕшĕнче Бенский юлташ директор пулса ĕçлекен заводра рабочисен, инженерсен, техниксен тата служащисен нумай йышлă митингĕ пулса иртрĕ. Унта заводăн, уйрăм цехсен руководителĕсем, стахановецсем хĕрÿллĕ сăмахсем каларĕç.

Кашни тухса калаканах завод коллективĕ тăрăшса ĕçлесе кăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнине палăртрĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлемелли çинчен, Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес тесе фронта ытларах пулăшса пымашкăн рабочисем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме хатĕрри çинчен каласа пачĕç.

Тухса калакансем хăйсен сăмахĕсенче Сталин юлташăн ятне асăнсан, кашни хутĕнчех митингри çынсем пурте нумайччен алă çупса, юратнă çулпуçа саламларĕç.

Завком председателĕ **Блошенко** юлташ, митинга уçса, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕ тата Халăх Комиссариачĕ завода июнь уйăхĕнчи плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла туни çинчен, май уйăхĕнче тунă ситĕнÿшĕн илнĕ ялав, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕн тата промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ заводрах юлни çинчен калать. Унтан профсоюзăн Центральнăй Комитетĕнчен тата Халăх Комиссариатĕнчен илнĕ саламлă телеграммăсене вуласа парать.

—Эпир июнь уйăхĕнче май уйăхĕнчинчен лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн завод икĕ Хĕрлĕ Ялав илчĕ. Пирĕн задача: çак ялавсене хамăр алăра çирĕп тытса тăма пирĕн июль уйăхĕнче тата лайăхрах ĕçлес пулать, çĕршыв оборони валли нумайрах тата пысăк пахалăхлă продукци парса тăрас пулать,—тет Блошенко юлташ.

Унтан завод директорĕ **Бенский** юлташ сăмах илет. Завод мĕнпур ресурсемпе туллин усă курса, июль уйăхĕнче тата нумайрах та лайăхрах продукци туса кăларма пултарнине палăртса, Бенский юлташ рабочисене пурне те тăрăшса ĕçлеме чĕнет: çĕнтерÿ пĕтĕм халăх тăрăшнипе пулать. Пирĕн пурин те тăрăшса ĕçлемелле, тет вăл.

Пĕр цехăн начальникĕ **Буйволов** юлташ хăйĕн цехĕ мĕнле ĕçлени çинчен, стахановецсен ĕçĕсем çинчен каласа кăтартать. Цехри рабочисем Стрелина нормăна 248 процент, Владимиров — 226 процент, Трубачев—220 процент тултарса ĕçленĕ. Турченкова нормăна 246 процент пурнăçа кĕртнĕ, июлĕн 9-мĕшĕнче вăл нормăна 648 процент тултарнă. Буйволов юлташ цех коллективĕ малашне тата лайăхрах ĕçлесе пыма сăмах пани çинчен калать, рабочисене тата тимлĕрех ĕçлеме чĕнет.

Инструментальнăй цехри чи лайăх стахановец **Мищенко** юлташ цехăн ĕçне мĕнле организацилени, çамрăк кадрсене вĕрентсе хатĕрлени çинчен калать. Вăл май уйăхĕпе июнь уйăхĕнче нормăна 300 процент ытла тултарса ĕçленĕ. Вăл хăйĕн ĕç меточĕ çинчен çапла калать:—Эпĕ ыранхи ĕçĕн планне яланах паян тăватăп. Вара çав плана пурнăçа кĕртме хатĕрленетĕп. Ĕçленĕ çĕрте ĕç вăхăчĕпе туллин усă куратăп, станоксемпе мĕн чухлĕ ĕçлеме пулать, çавăн чухлĕ нумайрах ĕçлеме тăрăшатăп. Манăн бригада (унта эпĕ вĕрентсе хатĕрленĕ рабочисем ĕçлеççĕ) июль уйăхĕнче нормăна 320 процент тултарма обязательство илчĕ. Эпир хамăр панă сăмаха пурнăçа кĕртессине шанатпăр. Производствăра хам енчен тăрăшса ĕçленипе пĕрлех эпĕ хамăн ĕçри опыта ытти рабочисене те каласа паратăп.

Заводри стахановкăсем **Фаяльская**, **Смирнова** юлташсем: халиччен ĕç нормисене икшер хут тултарса пынă пулсан, малашне тата хытăрах ĕçлеме пулатпăр, тесе каларĕç. Вĕсем ытти рабочисене те социализмлă ăмăртса стахановла ĕçлеме чĕнчĕç.

Цех начальникĕ **Юдкевич** юлташ заводри партипе профсоюз организацийĕсем социализмлă ăмăртăва сарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен, агитаци туса пыни çинчен каларĕ. Халĕ кашни рабочи хăй фронт валли ĕçленине ăнланса илнине, рабочисем лайăхрах ĕçлессишĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшнине палăртса, Юдкевич юлташ хăйĕн цехĕ заводăн мощноçне вăйлатас ĕçе тимлĕн туса пыни çинчен калать.

Митингра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ **И. М. Чарыков** юлташ Обкомпа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ячĕпе сăмах каларĕ. Вăл завод коллективĕ хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртсе пынине, май уйăхĕнче ăнăçлăн ĕçлесе, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕпе промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ чухне панă обязательствăна пурнăçа кĕртнине, большевикла ĕçлесе июнь уйăхĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнине палăртрĕ. Завод коллективĕ июньре май уйăхĕнчинчен лайăхрах ĕçлерĕ пулсан, июльре июнь уйăхĕнчинчен лайăхрах ĕçлемелле. Çавăн пек ĕçленипе кăна çĕнтерÿ тума пулать. Кашни рабочин производство планне ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлемелле, вăл çавăн пек ĕçлени—тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте çĕнтерÿ тума пулăшать, социализмлă государствăшăн тата совет влаçĕшĕн кĕрешни пулать.

Митинг пĕр шухăшлă пулса Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ. Çав çырура завод коллективĕ фронта тата вăйлăнрах пулăшса тăма сăмах парать. Завод коллективĕ талăкри графика çирĕп закон туса хума, хăйсен продукцине тăтăшах йĕркеллĕн туса кăларма, кашни рабочи плана тултарса пырса, кунран кунах ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пымалла тума, государство планне июлĕн 29-мĕш тĕлне тултарма пулать.

Торф кăларас ĕçре йĕркелĕх кирлĕ

Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес тесе, халĕ пирĕн çĕршыв хăйĕн пĕтĕм вăйĕсемпе ресурсĕсене мобилизацилет. Совет çыннисем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса татăклă обязательствăсем илчĕç. Малта пыракан коллективсем çак ăмăртăва хутшăннăранпа пысăк çĕнтерÿсем турĕç. Предприятисенче стахановецсен йышĕ куллен кунах ÿсе пырать.

Шупашкрти торф кăларса хатĕрлекен «20 лет Чувашии» ятлă предприятире уйрăм бригадăсем, уйрăм рабочисем нормăна 120—150 процент тултарса ĕçлеççĕ. Николаева юлташ бригади ытти бригадăсемпе ăмăртса ĕçлет. Вăл пĕрремĕш номерлĕ машинăпа кунне 30 пин кирпĕч туса кăларас вырăнне, июлĕн 6-мĕш кунĕнче 35 пин кирпĕч туса кăларчĕ, плана 120 процент таран пурнăçа кĕртрĕ. Торф кăларма вырăн хатĕрлекенсен Кайдовăпа Коновалова бригадисем, торф типĕтнĕ çĕрте Михайловăпа Васильева бригадисем кашни кунах нормăна 150 процент таран тултарса пыраççĕ. Канав чавакансен Майорова бригади те задание ытлашшипех пурнăçа кĕртсе ĕçлет.

Çав вăхăтрах торф предприятийĕнче нормăна тултарса пыман бригадăсемпе уйрăм рабочисем те чылай. Çавăнпа предприяти хăйĕн программине тултарса пыраймасть. Моисеева бригади питĕ начар ĕçлет. Ку бригадăри Ольга Воронцова прогул тунă.

Кашни бригада, кашни рабочи ĕç нормине тултарса пымалла тăвас тĕлĕшпе торф предприятийĕн руководителĕсемпе унти обществăллă организацисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Торф предприятийĕн директорĕ Воронцов юлташ торф сезонĕ пуçланиччен машинăсен запаслă часĕсене туянман пирки тăватă машинăран виççĕшĕ час-часах шестерня çĕмĕрĕлнипе усăсăр лараççĕ.

Парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем массăллă политикăллă ĕçе организацилемен, администраци производствăллă канашлусем ирттермен, кашни рабочин кулленхи ĕçне шута илсе пыман. Рабочисем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пынине никам та тĕрĕслемест. Кам мĕнле ĕçленине çырса пыма кăтарту хăмисем тунă пулсан та, кам мĕнле ĕçлени çинчен виçĕ-тăватă кун иртсен тин çыраççĕ, стена хаçачĕсем, боевой листоксем тухмаççĕ. Рабочисем валли хаçат-журналсем çырăнса илмен, вĕсем хушшинче докладсем, калаçусем ирттермеççĕ. Çавăнпа торф предприятийĕнче ĕçлекен хĕрачасем: «эпир колхозра радио итлеттĕмĕр, хаçатсем вулаттăмăр, пире докладсем туса паратчĕç, кунта нимĕн те çук, сĕм вăрманта тĕнчери лару-тăру çинчен ним пĕлмесĕр пурăнатпăр», тесе пăшăрханаççĕ.

Çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерес пулать. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе торф предприятийĕн хăйĕн программине пурнăçа кĕртмелле.

М. ПРОХОРОВ.

Шкул ачисем уйхир ĕçĕнче

Кушкăри (Елчĕк р.) туллимар вăтам шулта вĕренекен ачасем колхозсен уйхирĕсенче хастарлăн, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем 5 отряда уйăрăлнă. Отрядсене учительсем ертсе пыраççĕ. Шкул ачисем «КИМ» колхозра 250 гектар çинче çум çумланă.

Учитель-комсомолецсем бригадăсенче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, кашни кунах хире тухса колхозниксем хушшинче калаçусем ирттереççĕ.

К. СУДАКОВА.
Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ

Çĕр вăтăр çул каялла

Халĕ, аслă отечественнăй вăрçă хĕрсе пынă вăхăтра, тĕнче историйĕнчи аслă полководец Наполеон пирĕн тăван çĕршыва тапăнса кĕни 130 çул тултарнă куна хăйне уйрăм кăмăлпа асăнса илме тивет. Наполеон ун чухне пирĕн тăван çĕршывра хăйĕн пысăк державине пĕтерсе хунă. Икĕ отечественнăй вăрçă — 1812-мĕш çулта пулнипе халăхи — нумай енчен пĕр пек. Анчах çав икĕ событи хушшинче уйрăмлăх та питĕ пысăк.

Аслă стратег, 1812-мĕш çулти июнĕн 24-мĕшĕнчен вунçичĕ çул малтан вăрçă тĕлĕшĕнчен чапа тухса ăна çултан-çул ÿстерсе пынăскер, Российăна ун чухне пĕрех те Россия халăхне пĕтерсе лартас, унăн территорине тытса илес тесе килмен. Халăхи Германие тытса тăракан усал, намăссăр, тăмсай ирсĕрсем пурне те илтĕнмелле тата тĕплĕн каласа панă задачăсене вăл нихăçан та хăйĕн умне лартма шухăшламан.

Çак гениллĕ полководец 1812 мĕш çулти июнĕн 24-мĕшĕнче Неман шывĕ урлă каçнă чухне унăн аллинче пулнă вăйсем вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк курăннă. Вăл вăхăтра унăн çарĕ вырăс çарĕнчен виçĕ хут пысăк пулнă, вырăс çарĕ, çитменнине тата, çĕршыв пысăк пирки икĕ ушкăна уйăралса тăнă. Кунсăр пуçне, Наполеонăн çĕнтерсе илнĕ тĕнчери монархийĕн тылĕ нихăçан хавшами çирĕп пек туйăннă.

Россия ун чухне пысăк хăрушлăхра пулнă. Вăрçăн пур условийĕсем те уншăн майлă пулса пыман, ун çине тапăннă хăрушă тăшманшăн вĕсем вара питех те майлă пулса пынă. Пĕтĕм Европăра ун чухне ахаль çынсем çеç мар, Австри министрĕ Меттерних пек лайăх, нумай пĕлсе тăнă чее дипломатсем те Наполеон çĕнтерессине ĕненсе тăнă. Мĕн çăлса хăварнă-ха Российăна çав вăхăтра?

Российăна ун чухне вырăс халăхĕн патриотизмĕ калама çук вăйлăн çĕкленсе кайни, вырăс халăхĕ хăйне хăй нимĕн чухлĕ шеллемесĕр çапăçма пултарнин паттăр вăйĕ, хăйсене пăхăнтарма килнĕ ютçĕршыв çыннине парăнасшăн пулман çынсен çирĕп мăнкăмăллăхĕ çăлса хăварнă.

Халăх тăшмана çиленсе ăна хирĕç тăни уйăхран уйăха ÿссе çаралса пынă. Наполеон Российăна кĕрсе пынă малтанхи эрнесенчех — малтан Белоруссин тăрăх, унтан Барклайпа Багратионăн чакса пыракан çарĕсем хыççăн Смоленск облаçĕ тăрăх пынă чухне — Наполеонăн хăйĕн йышлă вăрçисенчен пĕринче те илтмен япала çинчен каласа панисене тĕлĕнсе кайса итлеме тивнĕ: крепостной çынсем хăйсен çуртчĕсене вут тĕртсе çунтараççĕ те вăрмана тарса каяççĕ, утта, сĕлле, тырра çунтара-çунтара яраççĕ, нимĕн те сутма килĕшмеççĕ. «Пурте пĕттĕр, тăшмана ан лектĕр!» — çакă Наполеон тапăнса пынă малтанхи тапхăрта, çав чи хăрушă тапхăрта, вырăс халăхĕн лозунгĕ пулса тăнă. Рекрут пулассине кирек хăçанах та пур повинноçсенчен те чи йывăрри шутланнă, анчах та вăл 1812 çулта çынсене хăратман, вĕсене савăнтарнă. «Рекрут пулса тăрсан çынсем юрлама, ташлама тытăнаççĕ.. Хамăр халăхпа мĕн чухлĕ лайăхрах паллашатăп эпĕ, çавăн чухлĕ çакна хытăрах ĕненетĕп: вăл халăхран лайăххи урăх çук», — тесе çырнă 1812-мĕш çулти сентябрĕн 30-мĕшĕнче, Тамбовран, урăхла каласан — инçери тылран, ун чухне пурăннă пĕр хĕрарăм хăйĕн тусĕ патне.

Салтаксем ытла та вăрах чакса пыратпăр, тесе ÿпкелешнĕ. Салтаксем хушшинче, хулари халăхпа ялти халăх хушшинче те, ватă генералăн Михаил Илларионович Кутузовăн ятне ытларах та ытларах асăнма пуçланă. Кутузова халăх вĕçĕ-хĕррисĕр шаннă. 1-мĕш Александрăн Кутузова вара главнокомандующи тума лекнĕ.

Халăх Наполеон çарне хирĕç тăрасси çав вăхăтран пуçласа вара тата темиçе хут ÿснĕ. Халăх тивĕçлĕ полководеца тупнă. Вăл полководец чăннипех Российăри мĕнпур кăмăла, туйăма, шухăшпа, шанчăка палăртса тăракан çын пулса тăнă.

Кутузов çакна лайăх ăнланса илнĕ: Наполеона аслă çĕршыва шаллалла илĕртсе кĕртсе, çав вăхăтрах вăл çĕршыва тустарса пырса, тăшманăн çарĕ тавра выçă пушхир туса пырса, Наполеона часрах тата сахалтарах çухатусемпе çĕнтерме пулать.

Унтан Бородино кĕрлесе кайнă. Наполеон çав çапăçу иртсен темиçе çултан Бородино патĕнчи çапăçăва хăйĕн ĕмĕрĕнче туса ирттернĕ питĕ йышлă çапăçусенчен чи хăрушши тесе ят панă. Бородино патĕнче вырăс çарĕ 120 пин çынран çурри — 58 пин çынна çухатнă. Наполеонăн та çухатăвĕсем питĕ пысăк пулнă: хăйĕн çав кун пулнă 130 пин çыннинчен вăл 50 пин çынна ытлăн çухатнă. Каç пулса çитсен тата тепĕр кунне Наполеон хăйĕн генералĕсемпе пĕрле çапăçу хирне пăхса çÿренĕ. Наполеонпа унăн генералĕсене çĕр çинче шутсăр йышлăн выртакан [illegible]

Бородино патĕнчи çапăçу сентябрĕн 7-мĕшĕнче, урăхла каласан — Россияна тапăннă хыççăн икĕ уйăх çурăран пулнă пулсан та, Наполеон çав икĕ уйăх çурă хушшинче Российăра вăрçăри хăрушлăхсене, Смоленска хÿтĕлекенсен çавтери пысăк хастарлăхне тата ытти те нумай курнă пулин те, Бородино ăна тĕлĕнтерсех янă. Вăл Мускава васканă, Кутузов та Бородино хыççăн Наполеона урăх чарса тăрасшăн пулман: вырăссен ватă полководецĕ хăйĕн чĕрĕ юлнă çарне пĕтерсе лартасшăн пулман, вăхăт Наполеона хирĕç ĕçлессине вăл пĕлсе тăнă.

Кутузов тĕрĕс шутласа хунă. Наполеона çиĕнчех мир туни çеç çăлма пултарнă, анчах та ăна мир паман. Тустарса, çунтарса пĕтернĕ Мускавра тăнă чухне Наполеон хăйĕн генерал-маркизне Лористона Кутузов патне мир ыйтма янă. Анчах вырăссен главнокомандующийĕ Кутузов мир çинчен калаçасшăн пулман çеç мар, вăл тата Лористона Франци императорĕн вырăс патши патне çырнă çырăвĕпе Петербурга яма та килĕшмен. Çав вăхăтра Наполеон валли Мускава пĕтерсе хунă пушартан нумай хăрушăрах пушар—халăх вăрçин пушарĕ хатĕрленсе тăнă.

1812-мĕш çулти август уйăхĕн вĕçĕнче офицер Денис Давыдов Кутузовран 130 салтакпа казак ыйтса илсе, Наполеонăн тылне сасартăк пыра-пыра тапăнма пуçланă. Анчах унччен Наполеонăн Смоленскран Мускавалла каякан çарĕн икĕ флангĕнче те таврари ялсенчи хресченсен мĕн килнĕ унпа хĕçпăшалланнă ушкăнĕсем сике-сике тухса пынă. Вĕсене е ăнсăртран кая тăрса юлнă салтак Четвертаков евĕрли, е хăйсен ялĕнчи хастарлăрах çын организацилене. Денис Давыдов хыççăн сентябрь—ноябрь уйăхĕсенче çар çыннисен, добровольцсен, казаксен партизанла отрячĕсем кăмпасем пек шăта-шăта тухнă, вĕсене Кутузов çарĕнчи офицерсем ертсе пынă. Çавăн пек отрядсем вара часах партизансен начальникĕсем патне пулăшу сĕнме пур çĕртен те пыракан хресченсен йышлă ушкăнĕсене организацилемелли ячейкăсем пулса тăнă. Паллах ĕнтĕ, çав хĕçпăшаллă ушкăнсем вĕсем пирĕн 1941—42 çулсенчи чаплă партизансем пек йышлă пулайман, хăйсен умне пирĕн партизансем лартакан задачăсем пек питĕ пысăк задачăсем лартайман, вĕсем туса ирттерекен операцисем пек сложнăй операцисем туса ирттереймен. Кутузов вĕсене кирлĕ вăхăтра çынсем ярса пама пултарайман. Вĕсен хĕçпăшалĕсем час-часах начарскерсем пулнă, пăшал пурин те пулман. Хресченсенчен çеç тăракан отрядсен вутлă хĕçпăшал пĕрре те пулман. Тата çапла та пулкаланă: Павлово ялĕнчи хресчен (Богородск хули патĕнчи ял) хăйĕн отрядне, акă, французсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллантарнă.

Партизансен отрячĕсен хĕрарăм-начальникĕсенчен староста Василиса (Смоленск облаçĕнчи Сычевски уездран) тата чĕнтĕр çыхакан Прасковья (çав кĕпĕрнери Духовщински уездран) уйрăмах чапа тухнă. Наполеон Смоленскри интендант кирлĕ таран запас пухманшăн çиленсессĕн, интендант начальстви çав интендант хутне кĕрсе çапла каланă: «Ваше величество, вăл айăплă мар, Прасковья пирĕн фуражирсене пĕрех те канăç памасть!» тенĕ. Наполеон çав çамрăк хресчен хĕрарăмĕн партизанла ĕçĕсем çинчен илтнĕ, çавăнпа интенданта каçарнă.

Российăран çавтери пысăк асаппа чакма пуçлас умĕн Наполеон хăй мĕнле халăхпа вăрçнине йăлтах ăнланса илнĕ. «Мĕнле тăшмансене хирĕç çапăçатпăр-ха эпир? — тесе ыйтнă Наполеонран маршал Бессьер Малоярославец патĕнче пулнă çапăçу хыççăн: — Ĕнерхи çапăçу хирне курмарăмăр-им вара эпир? Вырăс рекручĕсем, кăшт çеç хĕçпăшалланнăскерсем, начар тумланнăскерсем, вилĕме хирĕç мĕнле каярлăкпа кайнине асăрхамарăмăр-и эпир? Пăхăр-ха, государь, пĕтĕм хир пирĕн гренадерсен виллисемпе витĕннĕ вĕт»...

Чăнах та, Малоярославец патĕнче Наполеонăн чаплă, нумай хут çĕнтерсе мухтава тухнă гренадерĕсене хирĕç вырăссен яланхи çарĕсемпе пĕрле çапăçаллă ополченецсем, алла пăшал тытма та лайăх пĕлмен ополченецсем çапăçнă.

Вырăс çыннисем яланхи çарăн салтакĕсем пулса та, ĕнер çеç суха патĕнчен пынă ополченецсем пулса та, партизансем пулса та питĕ пысăк тимлĕх кăтартнă, вилĕме нимĕн вырăнне ху-[illegible]

[illegible] леонăн чакса пыракан çарне Россирен «ăсатмалли» планĕ питех те лайăх пурнăçа кĕрет: Наполеонăн пĕтĕм çарĕ сивĕпе, выçăпа вилсе пĕтет; тăм илсе пĕтнĕ, çĕтĕк çатăк тумланнă салтаксем çеç кăшт тăрса юлнă.

Çав пысăк асапла каялла чакни Наполеон çарĕшĕн тата çакăн пирки ытлах та хăрушă пулнă: ун чухне ĕнтĕ пысăк партизанла отрядсене пĕрлешмен хресченсем те чакакан французсене тыта-тыта вĕлернĕ.

Мĕнле асаппа чакнине каласа пама та хĕн. Курнă çынсем çапла калаççĕ: «Час-часах сарайсенче сивĕрен тарса кĕрсе ларнă французсене, хăйсен юлташĕсен ÿт ăшшипе ăшăнса ларакан французсене курма пулнă; вĕсем çав юлташĕсен ÿчĕсен чи лайăх пайĕсене каса-каса çинĕ. Унтан, халран кайса ÿксе, хăйсем те çавăнтах вилсе выртнă; вĕсене вара вĕсем патне аран-аран сĕтĕрĕнсе çитнĕ ытти французсем çинĕ».

Денис Давыдов çапла каласа парать: «Çын виллисемпе лаша виллисем мана çав çулпа пыма хытă кансĕрлерĕç; неприятелĕн аманнă йышлă салтакĕсем юр çинче выртатчĕç е лавсем çинче выçăпа тата сивĕпе вилессе кĕтсе ларатчĕç. Манăн çула икĕ трактир пушарĕ çутатса тăчĕç, вĕсенче телейсĕрсем нумайăн çуннă. Манăн çуна шăнса вилнĕ е вилес патне çитнĕ çынсен пуçĕсене, аллисене, урисене пыра-пыра перĕнетчĕ. Пĕтĕм çул тăршшĕпе çапла пулса пычĕ. Асапланакан тĕрлĕ çынсем йынăшни, кăшкăрни манăн чĕрене çура-çура каятчĕ, — ку вăл манăн тăван çĕршыв çăлăннин хăрушă гимнĕ пулнă...»

Россия çăлăнăçĕн, унăн территорине калама çук ирсĕр, вăрă-хурахла гитлеровецсен йыткĕтĕвĕнчен хăтарнин çĕнĕ гимнĕ янăрас вăхăт çывăхарса килет. Наполеон вăл 1812 çул хыççăн та çĕнĕ те çĕнĕ çарсем тума пултарнă, ăна 1813-мĕшпе 1814-мĕш çулсенче темиçе хут та мир тума сĕннĕ, анчах та вăл мир тума килĕшмен, ăна çĕнĕрен юнлă вăрçăсем туса, нумай вăй хурса çеç 1815 мĕш çулта тин çĕнтерме пултарнă. Гитлерла ирсĕрсен кунçулĕ апла пулмасть, Российăра вĕсен вилĕмĕ сасартăк çитет, вăл — çав вараланчăк бандитсем пуççулса тăрассине пĕтĕм Европăра часах та пĕтĕмпех пĕтерсе хуни пулать. Вырăс халăхĕ хальхи пек нихăçан та (1812-мĕш çулта та) этемлĕхе çăлакан чаплă, мухтавлă халăх шутланман-ха, халĕ, сталинла самана, унăн çавăн пек шутланмалла пулать.

Гитлеровецсем пирĕн çĕршывра çавтери ирсĕр, вĕçĕ-хĕррисĕр хаяр пулнипе, çĕнĕ историре нихăçан та пулман усал ĕçсем тунипе хăйсене пĕтĕмпех намăса кăларчĕç. Анчах та эпир çĕнтересси çитет, эпир таврасси те хаяр пулĕ. Тыткăна лекнĕ çынсене нумайччен асаплантарса вĕлернине, ачасене çĕре чĕрĕллех варса кунине, темиçе пиншер çынна чĕрĕллех çунтарнине, 1812-мĕш çулта çапăçнă çынсем шухăшлама та пултарайман çак мĕнпур усал ĕçсене çĕнтерÿçĕсем аса илĕç. Хăйсем çĕнтернипе тăшмана тивĕçлĕн тавăрма май тупнă çынсем çав усал ĕçсене пурне те аса илĕç. Ун чухне вара вĕсен алли ан чĕтретĕр!

Академик Е. ТАРЛЕ.

Еçе тухиччен государство умĕнчи обязательствасене татса пама тăрăшаççĕ

КАНАШ, июлĕн 8-мĕш. (**Телефонпа**). Районри чылай колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсен кулленхи ĕçĕсене пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Тырăсене пухас хĕрÿ ĕç вăхăчĕ пуçланиччен колхозсем госу-[illegible]

Июлĕн 3-мĕш тĕлне Ачакасси ялсовечĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан тата «Чăваш ЦИК» колхозсем çăмарта тата çăм обязательствисене пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. «Хĕрлĕ Çар», Чапаев ячĕпе тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем [illegible]

Ф. МАЛЫШКИН.

Чехословакин национальнăй оборона министрĕ генерал Ингр Мускавран тухса кайни

Июлĕн 9-мĕшĕнче Чехословаки республикин национальнăй оборона министрĕ генерал С. П. Ингр Мускавран тухса кайрĕ.

Аэродром çинче Ингр генерала çаксем ăсатса ячĕç: Юлташсем Ерĕсен Халăх Комиссариачĕн генеральнăй секретарĕ А. А. Соболев юлташ, Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ генерал-майор А. П. Панфилов, Мускав Совет председателĕн заместителĕ М. Я. Яснов юлташ, Мускав хула гарнизонĕн комендантĕ генерал-майор К. И. Синилов, Оборона Халăх Комиссариачĕн тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ В. Н. Евстигнеев тата Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ [illegible] Н. А. Зайцев.

Ăсатнă çĕрте хисеплĕ хурал пулнă.

ЧЕХОСЛОВАКИН НАЦИОНАЛЬНĂЙ ОБОРОНА МИНИСТРĔ ГЕНЕРАЛ ИНГР ХĂЙ СОВЕТ СОЮЗĔНЧЕ ПУЛНИ ÇИНЧЕН

Чехословакин национальнăй оборона министрĕ генерал Ингр, Лондонри «Чехословак» хаçатăн корреспонденчĕпе калаçнă чухне, хăй ССР Союзĕнче пулни çинчен каласа парса, Совет Союзĕнче пулма тата Чехословакин çар чаçĕпе çывăхрах паллашма түрĕ килнишĕн кăмăллă пулни çинчен пĕлтернĕ.

«ССР Союзĕнче пулни,—тенĕ Ингр генерал,—мана Совет Союзĕн официальнăй çыннисемпе тата Хĕрлĕ Çарăн представителĕсемпе çыхăнма май пачĕ. Мана пур çĕрте те хĕрÿллĕн кĕтсе илчĕç. Эпĕ ССР Союзĕнче курса илтни совет гражданĕсемпе Хĕрлĕ Çарăн çапăçури чаплă шухăш-кăмăлĕсемпе хăвачĕ пирки эпĕ малтан шухăшланине пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе парать. Халĕ кăна, çавтери аслă совет çĕршывне, хальхи вăхăтра ÿссе ларнă пысăк хуласене тата инçетри тылра пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пыракан гигантла промышленность предприятийĕсене курнă хыççăн кăна, эпĕ кунта мĕнтери пысăк задачăсене питех те йывăр условисенче тата кĕске вăхăтра татса панине пĕтĕмĕшпех ăнлантăм. Манăн чи малтанхи туйăм çакăн пек пулчĕ: совет тылĕ хурçă пек çирĕп тăрса тăвăллăн ĕçлет, унăн ĕçĕ чи малтан вăрçăри задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре каять. Манăн Хĕрлĕ Çара курма май килчĕ, кунта мана салтаксем çавтери çирĕп те тĕреклĕ пулни, вĕсем çавтери дисциплинăллă пулни тата лăпкă пулни, çавăн пекех тата мĕнпур рангсемпе степеньсенчи командирсем хăйсене тивĕçлипе тыткалани тĕлĕнтерчĕ. Совет Союзĕ çавтери хăватлă çĕршыв пулса тăнине, Хĕрлĕ Çар никам çĕнтереймин çар пулса тăнине, çакă вăл Совет Союзĕнчи мĕнпур калăхсем иксĕлми пĕрлехлĕ пулнинчен килнине, çакă вăл пĕрлештерекен идейăн тата правительство ăслă ертсе пынин результачĕ пулса тăнине эпĕ ĕненнĕ, Совет Союзĕнче халĕ курса-илтнисем çак ĕненĕве татах та ытларах çирĕплетрĕç. Сталин пуç пулса тăракан совет правительстви государствăна мĕнпур совет халăхĕн интересĕсемпе унăн телейлĕ малашлăхĕ ыйтнă пек ертсе пырать.

Тата эпĕ çакна палăртса каласшăн: Чехословакин СССР территорийĕ çинчи çар чаçĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен çав часть паянхи тĕп фронтра чи йывăр условисенче Хĕрлĕ Çарпа пĕрле алла-аллăн тăрса кĕрешĕ, чи лайăх хĕçпăшалланнă, лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ тата тĕнчери çарсенчен чи паттăр та хăюллă çар пулса тăракан çарпа союзлă пулса кĕрешĕ. Эпир пĕтĕмĕшпех ăнланатпăр, Совет Союзĕ Чехословаки халăхĕн чи шанчăклă союзникĕ пулнă, вăл халĕ те çавăн пекех пулса тăрать. Совет Союзĕ Чехословаки халăхне ирĕке кăларас ĕçре тата çак вăрçа çĕнтерÿллĕн вĕçленĕ хыççăн Чехословакие хăй тĕллĕн государство пулса пурăнма нумай вăхăтлăха телейлĕ пурнăç туса парас ĕçре Совет Союзĕ тулли шанчăк парать», (ТАСС).

Чехословакин государственнăй совечĕ хăй Совет Союзне кăмăлланине палăртать

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Чехословакин государственнăй совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Совечĕн председателĕ Прокоп Макова хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Хĕрлĕ Çар тата Совет Союзĕнчи халăхсем хастарлăн тата хăйсене пĕр шеллемесĕр кĕрешнипе вĕсене пĕтĕм демократиллĕ тĕнче хисеплет, вĕсен ĕçĕсемпе савăнать. Шăпах та вĕсем ĕнтĕ Германи çарне çĕнтерме çукки çинчен калакан халлапа сирсе ячĕç, пирĕн нацие тата пусмăрти ытти нацисене те противника татăклăнах тата часах çĕнтерессине çирĕп шанса тăракан турĕç. Çавăнпа эпĕ эсир ирĕк панипе тата сирĕн ятран хамăрăн ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви урлă Хĕрлĕ Çара тата совет халăхне пĕтĕм чĕререн тав тăвасшăн, эпир вĕсен ĕçĕсемпе хĕпĕртени çинчен каласшăн тата вĕсемпе пĕтĕм чĕререн туслă пулни çинчен каласа парасшăн».

Çак сĕнĕве Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзне хисеплесе тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ, ăна пĕр шухăшлăн йышăннă.

Англи авиацийĕ Вильгельмсхафен çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: июлĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германин гинĕс çар базине Вильгельмсхафена атакăланă. Вильгельмсхафен çавăн пекех тата подводнăй лодкăсем туса кăларакан центр та пулса тăрать. Истребительсен соединенийĕсем Францин оккупациллĕ пайĕнчи аэродромсем çине тата ытти объектсене те тапăннă.

Гитлеровецсем совет партизанĕсенчен хăраççĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн «Гамбургер фремденблатт» хаçачĕ июлĕн 4-мĕшĕнчи номерте хăйĕн çар корреспонденчĕн статьине пичетленĕ. Çав статьяра нимĕçсем оккупациленĕ совет районĕсенче партизанла движени анлăн саралса кайнине йышăннă. «Вăрмансенчен,—тесе çырать корреспондент,—партизансен отрячĕсем пирĕн тыла пыра-пыра тапăнаççĕ. Мускав партизансемпе самолетсем урлă тачă çыхăну тытса тăрать, çавăн пекех тата çав самолетсемпе разведка ĕçĕнче те, оккупациленĕ облаçсенчи агитаци ĕçĕнче те усă кураççĕ».

Партизансем нимĕçсене пысăк хăрушлăх кÿреççĕ. Çавна пула, корреспондент йышăннă тăрăх, «Германин тылри районсенчи чаçĕсен хăйсене валли хăрушсăрлăх тăвассишĕн тăтăшах ĕçлеме лекет. Партизансем кĕтмен çĕртен пырса тапăннинчен сыхланас тесе, нимĕç салтакĕсен блиндажсемпе баррикадăсем тума лекет. Кашни самант ырă мар ĕç кÿме пултарать. Партизансем чугунçулсене аркатаççĕ, поездсем çине пеççĕ, паника пуçлансан вара, çавăн пек çухалса кайнă самантра вĕсем трофейсем тытса илме пултараççĕ. Нимĕçсен хуралĕсем, мĕнпур тимлĕхе пухса, йĕри-таврари вырăна сăнаса тăраççĕ, темиçе сехетшерĕн вĕсем нимĕн те курмаççĕ, анчах сасартăк пăшал пенĕ сасă янăраса каять те постовой ÿкет».

Малалла корреспондент партизансемпе кĕрешес ĕç йывăрри пирки тата вырăнти халăх партизансем çине кăмăллăса пăхнă пирки ÿпкелешет. «Партизансен отрячĕсем хыççăн йĕрлесе çÿрени, — тесе çырать вăл,—кирлĕ результатсем памасть. Кунта пĕр çынна та шанма çук. Германи салтакĕ авăрламан винтовкăсăр 100 метр та аякка кайма пултараймасть».

Гитлеровецсем Украинăри ресурссем çине шанни пĕтсе ларнă

СТАМБУЛ, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Германия Украинăн пуянлăхĕсемпе усă курма пултарасси пирки гитлерла пичет питех те ÿкĕнĕçлĕн çырать.

Çапла нимĕçсен Турцире тухакан «Тюркише пост» хаçачĕ: «Украина ялхуçалăхĕ халĕ ытлашши продовольстви пама пултараймасть. Европăри çĕршывсем валли аш-какайпа çусем тăратасси çинчен кăçалхи çул сăмах та пулма пултараймасть. Германия Украина çине пачах та «тĕлĕнмелле край» çине пăхнă пек пăхмасть»,—тесе çырать.

«Довау цейтунг» хаçатăн ирĕксĕрех çакна йышăнма лекнĕ: нимĕçсем Украинăра хăйсене хăйсем питех те шанчăксăр туяççĕ, вĕсем унта ялхуçалăх машинисемпе ытти ĕç хатĕрĕсем яма хăюлăх тупаймаççĕ. Нимĕçсем оккупациленĕ районсенчи хула халăхĕсене яла хăвалаççĕ. «Пĕтĕм промышленность,—тесе çырать, — ишĕлсе пĕтнĕ, çавăнпа кулара ĕç те çук. Хулари рабочисен резервĕсемпе ялхуçалăх ĕçĕсенче усă курни уйрăмах çакăн пирки кирлĕ: вырăссем, хăйсем каялла чакнă чухне, мĕнпур тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата ĕç хатĕрĕсене е турттарса кайнă, е пĕтерсе тăкнă. Çапла вара çĕр ĕçне çара аллăпа тума лекет».

Венгрири антифашистсем Югослави партизанĕсене пулăшаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Анкараран илнĕ хыпарсем тăрăх, Венгри çарĕнче фашизма хирĕçле вăрттăн организаци ĕçлет. Çав организаци Югослави партизанĕсем патне хĕçпăшал ăсатса тăрать.

Союзниксен Стамбулри çар çыннисен ушкăнĕнче çапла калаçаççĕ: нумаях пулмасть Венгрин 9 офицерне, вĕсем Югослави партизанĕсене хĕçпăшал парса тăнă çĕре хупшăннă тесе, çар судне панă.

ЛАВАЛЬ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ФРАНЦИЕ ÇАРАТМА ПУЛĂШАТЬ

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Вишире çак кунсенче Германия Францин темĕн чухлĕ паровозĕсене, товарнăй вагонĕсене, рельсĕсене тата ытти чугунçул материалĕсене, грузовикĕсене, автобусĕсене Германие пама хушнине сÿтсе явнă. Лаваль правительстви гитлеровецсене малтанлăха 1.000 паровоз, 40.000 вагон, 35.000 грузовик тата темиçе пин тăрăшшĕ рельс пама йышăннă. Çав рельссене Францири чугунçулсем çинчен сÿтсе илсе памалла.

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри-Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи войскисем противник çине ăнăçлăн тапăннă, противникăн темиçе орудине пĕтерсе тăкнă тата тыткăна илнисем пур. Англин малта тăракан чаçĕсем ĕнер тăшманăн войскисене, уйрăмах та фронтăн кăнтăр участокĕнче, пĕр каçăç та паман. Англи самолечĕсем Эд-Даба районĕнче противникăн самолетсем лармалли площадкисене темиçе хутчен ăнăçлăн атакăланă. Бомбăсем çĕр çинчи самолетсене тÿрĕ лекнисене палăртнă. Кунсăр пуçне тата противникăн транспорт колоннисем çине бомбăсем пăрахнă.

Июлĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн 3 самолечĕ Александрия çине вĕçсе пырса тапăннă, анчах нимĕнле сиен те тăваймаи.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем противникăн оборонин кăнтăрти хĕрринчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăракан пысăк отрядне ытти войскăсенчен уйăрса илсе, çавăрса илнĕ, çав отрядра танксем, артиллери тата автотранспорт та пур. Унта халь вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КИТАЙРА ЯПОНИ БАЗИСЕМ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННĂ

ЧУНЦИН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Америкăн Китайри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америка самолечĕсем Японин Ханькоури, Кантонри тата Наньчанри аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔ ШВЕЦИН ПУЛĂ ТЫТАКАН СУДНИ ÇИНЕ ПЕНĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан «Дагенс нюхетер» хаçат çапла пĕлтерет: июлĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин çар самолечĕ Швецин Скаген мысĕнчен хĕвеланăçнерех вырăнта пулă тытса çÿренĕ «Эльза» ятлă судни çине бомбăсем пăрахнă тата ун çине нумайччен пулеметран пенĕ. Çав судно командинчен пĕр çын снаряд ванчăкĕпе аманнă. Çакна палăртнă, «Эльза» вăл нимĕçсем ишсе çÿреме юраман тенĕ зона тулашĕнче пулнă, çавăнпа та ун çине пеме нимĕнле сăлтав та пулман.

Шюкрю Сараджоглуна Турцин премьер-министрĕ пулма уйăрса лартнă

АНКАРА, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю Шюкрю Сараджоглуна кабинет туса йĕркелеме хушнă.

Сараджоглу çĕнĕ кабинат туса йĕркеленĕ. Унта малтан пулнă министрсем, суту-илÿ министрĕ Мюнмтаз Окмепсăр пуçне, пурте кĕнĕ. Сараджоглу çакăнпа пĕрлех ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса юлать. Суту-илÿ ĕçĕсен çĕнĕ министрне Юз Бехчета уйăрса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ ИМ. Н. Э. БАУМАНА

Об,являет прием студентов на 1942—43 учебный год.

Срок обучения 3 г. 5 месяцев.

Правила приема в Институт общие для всех поступающих в Ветеринарные ВУЗ'ы НКЗема СССР.

Лица, окончившие 10-летку, Рабфак и Техникум, в соответствии с этими правилами, зачисляются в число студентов Института без испытаний.

Прием заявлений до 25 августа 1942 года.

Иногородние студенты обеспечиваются жилплощадью.

Стипендии и освобождение от платы за учение—на общем основании.

Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт пред'является лично при явке в Институт.

Адрес: гор. Казань, уг. ул. Б. Красной и Красина, д. № 5/8.

3—1.

Чебоксарскому пивзаводу требуются рабчие: 1) сушильщицы по сушке сухарей, 2) разливальщицы, 3) солодовщицы.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская ул., 35, Пивзавод.

Дирекция.

3—1.

ТРЕБУЕТСЯ

опытный старший бухгалтер.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Ленинградская, 24.

Центральному Совету Осоавиахима требуются бухгалтера и бухгалтер-ревизор на постоянную работу.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ

серой масти, 8 лет, без особых примет.

Сообщить по адресу: Кугеси, Маслозавод.

2—1.

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ.

С подножного корма в районе оврага реки Кайбулки сбежала кобыла жеребая, темно-гнедой масти, грива подстриженная, год рождения 1927, рост 143 см.

Знающих местонахождение просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 25, Промышленный Банк.

Будет выдано вознаграждение.

3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1286 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64